Ытлари кунхи рубрика

Каç пулчĕ, ачасем, килелле!

Октябрĕн 9-мĕшĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ республика прокуратурин пуçарăвĕпе çул панă «Чăваш Республикинчи административлă майпа правăна пăсни çинчен» Чăваш Республикин Саккунĕн 24-1 тата 33 статйисене улшăнусем кĕртесси çинчен» Чăваш Республикин Саккунне йышăнчĕ. Октябрĕн 19-мĕшĕнче ăна ЧР Президенчĕ Н. Федоров алă пусса çирĕплетрĕ. Мĕн çинчен пырать-ха çĕнĕлĕхсенче сăмах? Çакăнпа паллаштарма паян район хаçачĕн тĕпелне район прокурорĕн пулăшаканне Екатерина Николаевна КУЗЬМИНАНА чĕнтĕмĕр.

– Екатерина Николаевна, çĕнĕ саккунăн тĕп çĕнĕлĕхĕ мĕнре-ха?

– Çĕнĕ саккунăн тĕп никĕсĕ – çул çитмен çамрăксене тивĕçлĕ воспитани парса ӳстересси тата вĕсенчен çĕршывăн шанчăклă ăрăвне хатĕрлесси, çакăншăн ашшĕ-амăшĕсемпе çамрăксене воспитани парассипе яваплă пулса тăракансен ответлăхне ӳстересси.

– Саккунăн 24-1 статйинче ачана ăс-тăн, вăй-хал, психика, чун тата кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен тĕрĕс-тĕкел аталанма ыйтакан требованисене пăхăнманни пирки пырать. Мĕнле çĕнĕлĕхсем пур кунта?

– Çĕнĕлĕхсем ачана тивĕçлĕ воспитани парассишĕн яваплă пулса тăракан кашни ашшĕ-амăшне тата çак ĕçе хăйсем çине илнĕ воспитательсене пырса тивеççĕ. 18 çул тултарман çамрăксене сексуаллă характерлă таварсем сутнă çуртсене, сăра-эрех ресторанĕсемпе барĕсене, алкоголь продукцийĕ çеç сутма пăхнă ытти суту-илӳ учрежденийĕсене тата ачасене ăстăн, вăй-хал, психика, чун тата кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен тĕрĕс-тĕкел аталанма чăрмантаракан вырăнсене кĕртнĕшĕн должноçри çынсене 1-3 пин тенкĕ, юридически лицосене 3-5 пин тенкĕ административлă штраф пама пултараççĕ.

– Çамрăксем ресторан-барсенче çеç мар, каç пулттипе урамсенче те нумай çапкаланса çӳренине асăрхама пулать.

– Ку тĕлĕшпе те йĕркесем çирĕпленеççĕ. 18 çул тултарман çамрăксен çĕрлехи вăхăтра обществăлла вырăнсенче, çав шутра стадионсенче, парксемпе сквер-сенче, обществăлла транспортсенче тата Интернет-салонсенче, саккуна пăсмасăр эрех-сăрапа суту-илӳ тума ирĕк пур обществăлла апатлану предприятийĕсенче тата ытти обществăлла вырăнсенче ашшĕ-амăшĕсемсĕр е вĕсене ылмаштаракан çынсемсĕр пулма юрамасть. Çак йĕркене пăсакан должноçри çынсене 1-3 пин тенкĕ, юридически лицосене 3-5 пин тенкĕ административлă штраф кĕтет.

Ачасене хутшăнтарса иртерекен мероприятисене йĕркелекенсем маларах пăхăннă саккун йĕркисене пăхăнмасан, вĕсем тĕлĕшпе те саккунра пăхса хăварнă. «Тăрăшуллă» ашшĕ-амăшĕсемпе вĕсене ылмаштаракансене кун пек чух 100-500 тенкĕ административлă штраф кĕтет.

– Тавтапуç, Екатерина Николаевна, ăнлантаруллă калаçушăн. Çĕнĕ саккун çамрăксем хушшинче право йĕркине пăсассине те чакарма пулăшасса шанас килет.

– Эпир те çапла шутлатпăр. Ашшĕ-амăшĕсем те, çамрăксем те саккунри çĕнĕлĕхсене тивĕçлĕ ăнланса йышăнасса шанатпăр.

А. БЕЛОВ калаçнă.

Спорт

Раççей призерĕ – Муркаш хĕрĕ

Октябрĕн 31 – ноябрĕн 1-мĕшĕсенче велокросс енĕпе Раççей ăмăртăвĕ иртрĕ. Унта пирĕн районти В. Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн вĕренекенĕсем Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командинче (пурĕ тăххăрăн) хутшăнса лайăх результатсем кăтартма пултарнă.

1994-95 çулта çуралнисем хушшинче Ирина Портнова кĕмĕл призер пулса спорт мастерĕн кандидачĕн нормине пурнăçланă. Людмила Филиппова тата Надежда Антонова та хăйсен ӳсĕмрисем хушшинче палăрнă – 4-мĕш вырăнсене тивĕçнĕ. Кĕçĕннисен ушкăнĕнче ăмăртнă Светлана Данилова вара 5-мĕш пулнă.

Маларах Муркаш районĕн хĕрĕсем Раççей Кубокĕнче те аван результатсем кăтартнă. Ун чухне Л. Филипповапа Н. Антонова кĕмĕл призерсем пулнă. Хăйĕн ушкăнĕнче иккĕмĕш пынă И. Портнова вара, шел пулин те, велосипед çĕмĕрĕлнипе пъедестал çине хăпарайман. Ку хутĕнче вара вăл хăй вăйлине çирĕплетсе пама пултарчĕ. Малалла та ăнăçусем пулччăр çамрăк спортсменсен.

М. СИДОРОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: И. Портновапа Н. Антонова старт умĕн.

Налук инспекцийĕнчен пĕлтереççĕ

Парăмçăсен шучĕ те, парăмĕсем те пĕчĕк мар

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Налуксем тӳлессипе пысăк парăмлисем те пур. Çак вăхăта налуксем, пĕрлехи социаллă налук тата обязательнăй пенси страхованийĕн страховани взносĕсене тӳлессипе вĕсен шутне организацисенчен çаксене кĕртмелле: ЗАО «Трест № 3 Спецмонтажгаз», ЗАО «МСО «Моргаушская», ЗАО «Агро-Урожай», МУП «Моргаушагропромснаб», ОАО «Моргаушский молочный завод», ООО «МилТ-рейд», ООО «Агрофирма «Лидер», ООО «Агрофирма «Хлебороб», ООО «Виват», ООО «Нежность», ООО «Содружество, ООО «Стройхолдинг», ООО «Трасса М-7», ООО «Моргаушрайбыт», ООО «Чăваш сăри», ООО «Удача», «Передовик» СХПК, ООО «Хлебороб», Суворов яч. хис. СХПК, «Свобода» СПК-племзавод, «Динамо» СХПК.

Уйрăм предпринимательсемпе çынсем хушшинче те парăмсене парса татма васкаманнисем çук мар. Кусем вĕсем Л.И. Васильева, В.Г. Васильев, А.А. Вернов, В.В. Гаврилов, М.А. Егоров, А.В. Иванов, В.И. Иванов, Л.М. Ивановская, Л.А. Колесникова, Э.В. Колесникова, А.В. Матвеев, В.М. Махонин, Т.М. Мирматов, И.П. Никифорова, В.А. Никоноров, А.А. Отенов, Н.И. Пихтеров, Д.М. Романов, О.И. Салтыков, А.И. Сядаров, Э.А. Терентьев, В.М. Тихонова, Н.Г. Трофимов, С.Е. Фадеева, А.В. Щукин, С.Г. Яковлев.

Инспекци çавна аса илтерет. Налуксемпе страховани взносĕсем социаллă пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ. Вĕсем тĕллевлисен шутне кĕреççĕ, çынсене пенси пама, социаллă тата медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерме каяççĕ, вырăнти тата республика шайĕнчи наци проекчĕсем мĕнле пурнăçланасси те çакăнтан килмест мар.

Налук инспекцийĕ парăмçăсене çавăн пирки пĕлтерет. Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн кăçалхи октябрĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса парăмçă суд актне пурнăçламан е вăхăтра пурнăçламан пулсан, исполнительнăй тӳлĕвĕн виçине çĕнĕ правилăсене пăхăнса палăртаççĕ. Унчченхи пекех, исполнительнăй тӳлев виçи шыраса илекен суммăн 7 проценчĕпе танлашать, анчах та халĕ вара вăл гражданен 500 тенкĕрен, организацисен 5 пин тенкĕрен кая пулма пултаймасть. Апла пулсан граждансен вăхăтра тӳлемен налукшăн, пенишĕн е штрафшăн суд приставĕсене татах 500 тенкĕрен кая мар тӳлеме тивет.

Çавăнпа та хăвăрăн парăмсен авăрне пысăклатса пыма ан тăрăшăр, ытлашши тăкак курас теместĕр пулсан, налуксене саккунпа пăхнă вăхăтра тата пĕтĕмпех тӳлесе татăр.

И. ШОРОНОВА,
налук инспекцийĕн парăмсене анализ тăвассин, отчетлăхпа йĕркелӳ пайĕн пуçлăхĕ.

Редакци почтинчен

Ватăсем патĕнче пултăмăр

Вырсарни кун ирхине ачасем Панкли ялĕнчи клуб умне пуçтарăнчĕç. Вĕсене клуб директорĕ Р. Лукина тата кунти тавра пĕлӳ музейĕн директорĕ Н. Яковлева Хурăнкасси ялне Степановсем патне илсе кайма пулчĕç. Çула май ачасем вăрçă вăхăтĕнче Илья Васильев йĕркеленĕ атă-пушмак мастерскойĕ пулнă вырăнта чарăнчĕç. Çав мастерскойĕнче ача чухне Ю. Скворцов çыравçă та ĕçленĕ иккен.

Хурăнкассинче пире Тамара Илларионовнапа Варсонофий Степанович Степановсем кĕтсе илчĕç. Тамара Илларионовна – Ю. Скворцовăн йăмăкĕ. Вăл хăнасемпе питĕ тарават. Пиччĕшне ырăпа аса илет.

Варсонофий Степанович Сталин репрессине пула 4 çултах ашшĕсĕр тăрса юлнă. Инкек кунпах вĕçленмен-ха. 13 çула çитсен амăшĕ те çут тĕнчерен уйрăлнă. Çапла вара Варсун пиччен хуçалăх тытса тăма тивнĕ. Вăрманне те ĕçленĕ, суха та тунă. «Тăраниччен апат çисе куратăп тесе те шутламан. Сĕтел çинче çăкăр паянхи пек тулăх пуласса тĕлленмен те, – тет вăл йывăр çулсене аса илсе. – Шăнтсанах шĕшкĕ кăчки пуçтарма каяттăм, çăнăхпа хутăштарса пашалу пĕçерме каятчĕ. Юман йĕкелĕпе пĕçерни вара йӳçĕччĕ. Çапах выçнă хырăма лăплантарма вăл та тем пекехчĕ. Паян çăтмахри пек пурăнатпăр вĕт. Пирĕн ачалăхри вăхăт нихăçан та ан таврăнтăр. Телейлĕ çитĕнĕр», – тет Варсун пиччĕ.

Çак хисеплĕ мăшăр пирĕн музей валли Ю. Скворцовăн 2007 çулта тухнă «Пурнăç хумĕ» кĕнекине парнелерĕ. Музей тепĕр экспонатпа пуянланчĕ.

Ачасем вара ватăсене юрă-ташăпа савăнтарчĕç. Вăрăм ĕмĕр сунчĕç ăшă кăмăллă çынсене.

Н. ЯКОВЛЕВА.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.
Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 37-40.

Продаю двухкомнатную квартиру.
Тел.: 8-937-374-28-96.

Покупаем волосы 6 ноября (пятница). Дом быта (с торца), парикмахерская «Шарм» с 10-00 до 14-00 часов.
Тел.: 8-927-861-99-91.

Продается трактор МТЗ-82Л с большой кабиной, в хорошем рабочем состоянии. Цена договорная.
Тел.: 8-952-023-10-09.

Все отделения почтовой связи Моргаушского почтамта 3 ноября работают с сокращением рабочего дня на 1 час, 4 ноября для отделений почтовой связи всех классов – выходной день, 5 ноября все отделения почтовой связи работают по установленному режиму.

Удостоверение ветерана боевых действий № 057125, выданное 20 октября 2005 года на имя Игнатьева Александра Николаевича, считать недействительным.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271201:67, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:271201, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Участница долевой собственности Архипова Зинаида Ивановна, 03.03.1959 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Ярабайкасы, ул. Молодежная, д. 2, кв. 2, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Архиповой Зинаиде Ивановне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Ярабайкасы, ул. Молодежная, д. 2, кв. 2.

Участница долевой собственности Аврамова Валентина Леонидовна, 23.03.1968 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, с. Александровское, ул. Мира, д. 1 «а», сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Александровское, на территории землепользования СХПК им. Ильича, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:250301 площадью 1,13 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Александровского сельского поселения.
2. Аврамовой Валентине Леонидовне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, с. Александровское, ул. Мира, д. 1 «а».

Участник долевой собственности Аврамов Владислав Иосифович, 08.07.1967 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, с. Александровское, ул. Мира, д. 1 «а», сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Александровское, на территории землепользования СХПК им. Ильича, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:250301 площадью 1,13 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Александровского сельского поселения.
2. Аврамову Владиславу Иосифовичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, с. Александровское, ул. Мира, д. 1 «а».

Участник долевой собственности Мадиков Юрий Фаинович, 17.11.1965 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, д. Васькино, ул. Ленина, д. 3, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Александровское, на территории землепользования СХПК им. Ильича, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:250801 площадью 2,26 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Александровского сельского поселения.
2. Мадикову Юрию Фаиновичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, д. Васькино, ул. Ленина, д. 3.

Участница долевой собственности Сидорова Калиса Ефимовна, 18.04.1926 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, ул. Центральная, д. 16, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Кадикасинское, на территории землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:072501 площадью 1,42 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.
2. Сидоровой Калисе Ефимовне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, ул. Центральная, д. 16.

Участница долевой собственности Сидорова Зоя Ивановна, 01.12.1966 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, ул. Центральная, д. 16, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Кадикасинское, на территории землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:072501 площадью 1,42 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.
2. Сидоровой Зое Ивановне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, ул. Центральная, д. 16.

Участница долевой собственности Бутурнова Валентина Германовна, 11.03.1946 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Победы, д. 3, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Юнгинское, на территории землепользования СПК «Новая Юнга», участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:080901 площадью 23,46 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Юнгинского сельского поселения.
2. Бутурновой Валентине Германовне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Победы, д. 3.

Участники долевой собственности Родин Дмитрий Меркурьевич, 30.01.1982 года рождения, Родина Пелагея Петровна, 12.03.1947 года рождения, проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Шоркасы, ул. Сарьялы, д. 13, сообщают о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Герой», участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:180701 площадью 2,70 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Родину Дмитрию Меркурьевичу, Родиной Пелагее Петровне, проживающим по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Шоркасы, ул. Сарьялы, д. 13.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 02.11.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3800.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.